# Хăва хуллин те «чунĕ» пур

Ăстаçăсем

**Пирĕн районта алĕç ăстисен йышĕ хутшăнсах пырать. Çур çул каялла Сĕнтĕрвăррине Владимир АЛЕКСЕЕВ куçса килнĕ. Малтан вăл Çĕнĕ Шупашкарта пурăннă.**

20 çул ытла Владимир Иванович çатан япаласем тăвассипе ĕçлет. Вăл çак ĕçе иртнĕ ĕмĕрхи 90-мĕш çулсенчех кӳлĕннĕ. Ун чухне хулăран авса сĕтел-пукан тăвас ăсталăха алла илнĕ. Унăн ячĕ республикипех сарăлнă. Вăл тăвакан япаласене çынсем кăмăлласах туяннă. Анчах та пĕр тапхăр В.Алексеевăн çемье пурнăçĕпе çыхăннă сăлтава пула юратнă ĕçе пăрахма лекнĕ. «Халĕ тепĕр хут çухатнă ята çĕклеме лекет», - тет вăл, шӳтлесе.

Пирĕн районта нумаях пулмасть иртнĕ Акатуйра В.Алексеев хăваран авса тунă ытти япаласемпе пĕрле хыçлă пукан та (кресло) сутатчĕ. «Ăна эпĕ çĕр çул каяллахи хыçлă пуканран пăхса турăм, çав вăхăтрах ĕлĕкхи ăстаçăсен вăрттăнлăхĕсене те вĕренме лекрĕ, - пĕлтерчĕ вăл. - Вунтăххăрмĕш ĕмĕрте Сĕнтĕрвăрринчи ăстаçăсем хулăран авса шăпах çакăн йышши сĕтел-пукан тунă. Халĕ çатан япаласем ăсталанă чух çĕнĕ йышши технологипе усă кураççĕ. Ĕлĕкхине маннă. Тĕрĕссипе каласан, ĕлĕкхи ăстаçăсем хальхисенчен чылай енĕпе маттуртарах пулнă».

Пĕр хыçлă пукана хулăран тума икĕ эрне кирлĕ иккен. Хакĕ те пур ун - 12 пин тенкĕ. Унсăр пуçне Владимир Иванович çатан диван, сĕтел, абажур, тĕкĕр кăшăлĕ, сентре тата темтепĕр тума пултарать. Хăшпĕрисем ăна пӳртри пĕтĕм интерьера саккас парса тутараççĕ.



В.Алексеевпа Чăваш Енре çеç мар, Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пурăнакансем те çыхăнма пултараççĕ: унăн Интернетра ятарлă страница та пур. Владимир Иванович тунă япаласем нумай выртмаççĕ. Вĕсене эрне хушшинчех илсе пĕтереççĕ.

Паллах, авса тунă япаласен пахалăхĕ хулă пахалăхĕнчен нумай килет. Чи кирли – унăн пиçĕ пулмалла. Ытларах чухне ăстаçă хăва хуллипе усă курать. Хăвисен тĕсĕсене те шута илмелле иккен. Хуллине тасатса типĕтме те пĕлмелле. В.Алексеев пĕлтернĕ тăрăх, Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнче шăпах çатан япаласем тума юрăхлă хăвасем ӳсеççĕ. «Хуллăн та чунĕ пур. Анчах вăл ăстаçă аллинче çеç чĕрĕлме пултарать», - тет Владимир Иванович. Унпа килĕшмеллех ĕнтĕ.

Хулăран авса тунă япаласем ытларах упранччăр тесе, ăстаçă вĕсене ятарлă лакпа сăрлать. Çатан сĕтел-пукана тусантан тасатсах тăмалла, уйăхра пĕр хут йĕпетнĕ пусмапа шăлса илмелле, унсăрăн вăл ытлашши типсе кайма пултарать, хăйĕн пахалăхне çухатать. Пăхса, типтерлесе тăрсан çатан сĕтел-пуканпа вуншар çул усă курма пулать. Музейсенче çĕр çултан иртнисем те упранаççĕ.

В.Алексеев ĕçĕсене тĕрлĕ куравсенче те курма пулать. Сăмахран, Шупашкарта иртнĕ Республика кунĕнче пирĕн районти ăстаçăсем тăратнă япаласем хушшинче В.Алексеевăн та пулчĕç. Унсăр пуçне вăл кăсăкланакан куравçăсене çатан япаласем тăвассипе мастер-класс та кăтартрĕ.

**И.ВАСИЛЬЕВ.**